**Пурлăх комиссарĕ**

...Атăл урлă каçнă чух чун темскер çĕкленсе, çунатланса тăрать. Атăл сывлăшĕ, Атăл юхăмĕ, Атăл хумĕсем пĕр-пĕринпе чикеленсе, таптаса иртни кăкăра уçать, пит-куçа кăтăклать, пуçри шухăша çунатлантарать.

Çармăссем ахлатса, тарласа ишеççĕ. Хунар пуçлăх пĕтĕм хавалĕпе суллине çĕклесе ывăтса пырать. Инженерсем пируссем туртса калаçса каçаççĕ. Пуринчен ытла чăваш инженерĕ пĕр чарăнми калаçать.

- Чăваш çĕршывĕ ларнă çĕртех типсе хăрнă теççĕ. Çав çĕршывра индустри пулас çук теççĕ: Шупашкар тавринче пĕр хапрăк-савăт та аталанас çук теççĕ. Эпĕ çак сăмахпа килĕшместĕп. Атăл шыв-шурĕ, унăн сĕм вăрманĕ ӳлĕмрен пĕтĕм таврана индустрилеме пултарĕ. Атăла Дон шывĕпе пĕрлештерсен, Атăла Хура тинĕспе çыхсан, пĕтĕм тĕнче çулĕпе çыхсан, пирĕн тавра кĕтмен çĕртен урăх евĕрлĕ çаврăнса ӳкме пултарать. Унтан Ветлугăн сĕм вăрманĕ урлă сверхмагистраль иртес пулсан - пирĕн çĕршыв Америка çаврăнма пултарать.

- Ну, ну, каларăн, - тет вырăс инженерĕ. - Эсĕр çав, чăвашсем, аташатăр, тĕнче çине чалăш куçпа пăхатăр, эсер пурте националистсем...

Киме хăйăр çине пырса тухрĕ, унтан кĕпер çумне пырса перĕнчĕ. Ăйăр хартлатать, тапăртатать. Танюк ăна шăхăрса йăпатса çавăтать. Кӳме çине Хунар юлташ улăхса ларчĕ те каларĕ:

- Чăваш лачаки çине, çĕр тирĕсĕ çине, унтан вăрман савăчĕ патне çаврăнса тухăпăр. Хытах ан хавала...

- Ăçта хăвалама... Вăл ерипен юртсан та инженерăн лашисене пăрахса хăварать, - терĕ те Танюк ларкăç çине вырнаçса лашине вăрман çулĕпе чуптара пуçларĕ.

- Çулăн икĕ енĕпе вăрман кашласа ларать. Вăрман мăкăртатать, кĕрлет. Вăхăчĕпе уйрăм сасăпа ахăрса та илет. Чăтлăх ăшнелле пăхма та чун именсе пырать: ак-ак упа-кашкăр сиксе тухассăн, ак-ак хир ĕни е мăйракаллă пăлан сиксе тухассăн туйăнать. Арçурисем, упăтесем, хаяр кайăк-чакак кĕтĕвĕсем, нумай пуçлă çĕленсем, вĕçекен калтасем, авалхи йĕрĕхсем, киреметсем ирĕксĕрех пуçа кĕреççĕ, кăмăла пăтратма тапăнаççĕ. Сĕм вăрман хăватне кам халиччен

чухлайнă, сĕм вăрман пурнăçне кам халиччен пĕлсе çитерейнĕ? Мĕнле те мĕнле этем ывăлĕ-хĕрĕсем вăрмана хирĕç тавлашма пултарайнă? Кам та кам ăрăвĕ-йăхĕ çутçанталăка хирĕç алă çĕклесе тавлашса пăхнă? Акăш-макăш мĕлкесем, лапсăркка арман çуначĕсем, мулкач тĕлĕкĕн тĕлĕрчĕкĕсем!.. Вара çĕнĕ этем йăхĕ-несĕлĕ килсе пуснине эсир халь те чухлаймастăр-им? Илтетре - сĕм вăрманта çивчĕ пуртă сасси чан сассинчен те хытă янăрать. Илтетре - çĕнĕ этем йăхĕ-несĕлĕ çĕршыва чĕтĕретсе, çутçанталăка хумхантарса çаварса тара пуçларĕ... Çĕнĕ этем вăрман чăтлăхне хĕвел çути ывăтать. Çĕн этем сĕм вăрмана çĕнĕ пурнăç йăви çавăрать. Çĕнĕ этем сĕм вăрман хăватне хăй урапине кӳлет.

- Хунар юлташ пуçа тайса тĕлĕрсе пырать. Вăрман сывлăшĕ ăшчике çуса çĕнетрĕ. Пыр тĕпĕ çемçелсе кăтăкланать. Çунса хĕртекен ӳпке-пĕвер лăпланчĕ. Ут-пӳ выртса канасшăн. Ӳт-тир киленкĕçлĕ сӳленсе тăрать. Пуçра шухăшсем тĕтре пек тăмаланса иртеççĕ. Шупашкар... Мăн Çурт... Тĕп Ĕçтăвком.. Комиссариат... Иртен пуçласа автан авăтиччен ĕç... Вĕçĕмсĕр ĕç, халăх ĕçĕ, ял ĕçĕ мар - пĕтĕм чăваш çĕршывĕн ĕçĕ. Халăх пурлăхĕн тытăмĕ. Халăх хуçалăхĕ, халăх кил-йышĕ, халăх пурнăçĕ. Сĕм вăрман пек пысăк ĕç, сĕм вăрман пек хумханса, кашласа тăракан мăн ĕç... Хресчен тĕнчи, тинĕс пек вĕçĕмсĕр тĕнче. Имшеркке хуласем... ишĕлнĕ çулсем... çĕмрĕк кĕперсем... лăчăр-лачăр йăнăшса ĕçлекен хапрăксемпе савăтсем. Йĕри-тавра юхăннă пурлăх, ишĕлме хатĕрленнĕ кил-çурт, хуçалăх... Тĕнче вăйĕ кирлĕ çав пурнăçа йĕркене кĕртме. Хисепсĕр мул. Хисепсĕр хастарлăх кирлĕ çав пур çĕре çĕнетсе ура çине тăратма. Этем ывăлĕ-хĕрĕ курман терт кирлĕ халăх пурлăхне çĕнĕ çул çине сĕтĕрсе кăларма. Çав хастарлăхпа, çав тертпе пуян чăваш ĕçхалăхĕ. Ĕмĕртен тăм-хăйăр чаваласа çăкăр тунă хресченсем, ĕçпе пиçнĕ чухăнсем, лашасăр та, пĕр лашаллă хуçасем пурте - çĕр хурчĕсем. Чăпта çапса, çăпата туса хырăма тăрантаракан мĕскĕнсем, Атăл тăрăх нушаланакан бурлаксем. Сĕм вăрмансенче хĕл çутине курмасăр вăрман касса-турттарса асапланакансем. Тĕнче тăрăх хапрăк-савăтсенче ĕçлесе пурăнакан чăвашсем. Уралта, Çĕпĕрте, Кавказра ĕç шыраса çӳрекен хресченсем. Тĕнче тăрăх çĕнĕ çĕр шыракан, çĕнĕ çĕре куçма терт тытнă çемьесем. Çĕпĕр станцийĕсенче выртакан выçă чăваш ачи-пăчи. Пур тĕлте те ĕççĕр аптăранă

этемсем... Пуç çаврăнать. Шухăш саланать. Тăн-пуç анăрать сирĕн çинчен тĕлĕрсен. Куç умĕнче сĕм вăрманран хăватлă чăваш халăхĕ тăрать. Ĕçпе пиçнĕ, тарпа пĕвеннĕ, юнпа нумай сĕрĕннĕ этем пуçне уçмасть. Ĕçхалăхĕ, хура халăх çаннисене таварнă. Унăн пĕрлешӳллĕ вăйĕ çутçанталăкран хăватлă. Пĕр çын сурсан - типсе тăрать, халăх сурсан - кӳлĕ пулать. Ĕç халăхĕ алтивĕççĕн тăрсан - ăна хирĕç мĕн тăрĕ, ăна хирĕç мĕн тӳсĕ? Чăваш çĕршывĕ çĕнĕ пусма çине улăхĕ. Ĕмĕрхи пусмăра ывăтса хуçалăха çĕнĕ тымарпа сыпса çĕнĕ çулпа аталантарĕ. Ял часах палламалла мар улшăнса кайĕ. Пĕр лашаллă хуçалăх, виçĕ пусăллă анаçаран, ĕçлесе тăрантарайман пур йĕр çухалĕ, çĕнелĕ... Чăваш çĕршывĕнче индустри çуралĕ, техника аталанĕ, социализм йĕрки карталанса тĕрекленĕ...

Кӳме вĕçĕмсĕр шыв-шур таврашĕнчи хуралтăсем патне тухрĕ. Татăк-татăк кӳлĕсем, вĕçĕмсĕр лачака. Вăрман пек хăмăш кашласа ларать. Йĕри-тавра пĕлĕт пек вăрăмтунапа ӳпре вĕркĕшет.

- Ак хайхи, ирсĕр вырăна чăваш лачаки тесе виртлешеççĕ. Автономи лачаки вăл тесе мăшкăллаççĕ, мурсем, - тет Танюк лашине тăварма хăтланса.

Хунар, унтан пырса çитнĕ инженерсем хуралтăсем ăшнелле утаççĕ.

- Пирĕн лачака хуралтисем тимĕрçĕ лаçĕнчен те ытла чаплă мар... Анчах çак вăхăтлăха кăна. Эсĕ, юлташ комиссар, ху пĕлетĕн: кăткă йăва пуçлас пулсан малтан нăрă шăтăкĕнчен те пĕчĕкçĕ шăтăк шăтарать, анчах талăк та иртмест - кусатăран çӳллĕш купа, тирпейлĕ кăткă кил- çурчĕ те пулса тăрать, - тет чăваш инженерĕ утнă халлĕн. - Этем йăхĕ кăткăран ĕçченрех, хăватлăрах. Эпир шанатпăр, çавăнпа та пулать тетпĕр... Çĕнĕ йĕрке шăнăçать, тымар ярать, хăват илет тетпĕр, ĕмĕр кисренми тĕрекленет тетпĕр, — тет Хунар кулкаласа.

Хуралтăсенчен иртнĕ-иртменех малта пылчăк çинче хĕрĕх-аллă чăваш ĕçлекенĕ курăнать. Вĕсем комиссарпа инженерсене курсанах чавалашма чарăнаççĕ, хăшĕ хирĕç тухса, типĕ çĕрелле пырса тăраççĕ.

- Сывă-и-ха, юлташсем! Ĕçсем витĕнсе пыраççĕ-и, - тет Хунар çитнĕ-çитменех.

- Сыввине сывă та-çке, ĕçсем питех ăнмарĕç-ха...

- Тата мĕн?

Эртелтен пĕр çамрăк йĕкĕт малалла иртет. Вăл пус тасатаканран, кăмака тăваканран та ытла пылчăкпа вараланса пĕтнĕ. Вăл кулкаласа калама пуçлать:

- Чи малтан мĕн калас... Ху та пĕлетĕн: çĕр ĕçĕ - йывăр ĕç. А ку лачака ĕçĕнчен ирсĕр ĕç те çук-и тен. Çĕр кăмрăкĕ чавалатăн – вăл йывăр. Тĕрĕс, калама та кирлĕ - вăл йывăр. А ку ĕç - çĕр çăттăр ĕнтĕ... ăçта пусмастăн - май таран путса анатăн. Йĕри-тавра ишĕлсе кăна пырать...

- Ку ĕç пулать-и: ак кĕреçене тытса ывăтатăп та киле вĕçтеретĕп, -тет пĕр сасă эртелтен.

- Ан пӳл çын сăмахне... кирлине калать, - теççĕ нумайăшĕ пĕр харăс.

Малалла тухнă çамрăк тытăнкаласа тăрать те тата калама пуçлать:

- Эпĕр шалу ÿстерме ыйтас терĕмĕр те, тата те юрать, те юрамасть тетпĕр. Ачасем хысна ĕçĕ мар вĕт, хуçа ĕçĕ мар вĕт - хамăр ĕç теççĕ... Чăнах та ĕçĕ хамăрăнах пулас та. Анчах каллех тата, мĕне кирлĕ-ши вара çак ĕç тесе те илетпĕр. Чăнах та ăçта хумалла вара çак çĕр тирĕсне? Мĕн хапи пур çав çĕрĕке тĕк тăнă çĕртен чаваласа кăларнийĕн?

Хунар кулкаласа илет те çамрăк сăмахне пӳлет:

- Сире шалу ÿстерме хутăмăр, эпĕ пĕр енчен çавна пĕлтерме килтĕм те. Лачака кăмрăкĕ мĕнле усă панине, ăна мĕншĕн эпир чаваланине ак инженерсем каласа ăнлантарĕç, вĕсем темĕн халиччен сире каламан çав. Пĕр сăмахпа каласан - çак ĕçе тапратса мая ярсан, эпĕр çакăнта ик-виçĕ хапрăк-савăт тăвас тетпĕр. Сирех ĕç пулĕ, çак пылчăк ĕçĕнчен тасарах ĕç пулĕ. Тата мĕн каласси пур, тантăшăм?

- Вăл хăçан пулать - пĕлместпĕр те. Тата ĕçĕ те ăнса пымасть. Алтнă канав шыв унтан юхнă-юхманах ишĕлсе питĕрĕнчĕ. Çĕр ĕмекен машинăн йĕркине тупаймастпăр. Асап ĕнтĕ - шĕшлĕ тыткалама хăнăхнă ал-урара мел сахал çав...

- Ну, юрĕ, юлташсем, юрĕ. Эпĕ ĕнтĕ: эсĕр тӳрех сăпастувкă тума хатĕрленнĕ пулĕ тесе шиклентĕм... А эсĕр ĕçе ăнтарасшăн терт тытнă иккен. Атьăр-ха эппин, пĕрле çав меле тупаймăпăр-ши? - тет те Хунар пиншакне пăрахса çаннисене тавăрать. Кăна курсан инженерсем те çиелти тумĕсене

пăрахса ĕçлеме хатĕрленсе тăраççĕ.

Йĕри-тавра чăкăлтăш. Тĕрлĕ тĕлте кăларса типĕтнĕ торф темисем лараççĕ. Торф кирпĕчĕсем выльăх-чĕрлĕх тирĕсĕнчен тунă кирпĕчсем евĕрлĕ. Тĕмесен варринче типĕрех çĕрте лутра пус тараси пек япала курăнса ларать.

- Ак çак тăрнана куçарса лартар-ха... Ав çавăнта меллĕрех çĕре лартар, - тет комиссар. Пурте Атăл бурлакĕсем пек, харăс кĕвĕлесе, машинăна куçарса пыраççĕ. Машинăна лачака кăмрăкĕ кăларнă шăтăк хĕррине пырса лартнă-лартман çĕртен чăваш инженерĕ шуса ӳкет те шăтăка анса каять. Вăл кăкăр таран пылчăклă шыв çине кĕрсе тăрать. Инженера пулăшас тесе ăна хулĕнчен тытать те Хунар та ун хыçĕнчен пĕç тĕпĕ таранччен анса ларать. Ĕçлекенсем чупкаласа пырса вĕсене сĕтĕрсе кăлараççĕ.

Ак инкек, ак синкек... вара варалантăр пулĕ? Йĕпентĕр пулĕ? - тесе пĕр ватă чăваш пĕççине шарт! çапса тăрать.

Хунарпа инженер ахăлтатса кулса тумĕсене пылчăкран тасатаççĕ. Хунар аттисене хывса шыва такать те пуртенккине пăрса типĕтсе çĕнĕрен тăхăнать. Машина патĕнче инженерсем кăшт çалланкалаççĕ те, вăл ĕçлеме тытăнать.

- Ак хайхи тăрнамăй ĕçлет те, катăршнăй, - тет эртел хавасланса.

- Сире мунча кирлĕ ĕнтĕ йĕпеннĕ хыççăн, мунча та - пĕр-икĕ курка эрех, - тет кулăшкаласа ватă чăваш.

- Мунчипе эрехре ĕç тăрать пулсан юрĕччĕ те... сывлăх çук ман, кăкăр пăсăлчĕ... çавăнтан хăратăп, - тет Хунар сивĕпе чĕтĕрекелесе. Комиссар Танюка лаша кӳлме, инженерсене вăрман савăтне кайма хатĕрленме хушать. Хăй, юлашкинчен, ĕçлекенсене çакна каласа уйăрăлать:

- Тăвансем! Хăшĕ эсĕр юлташсем, хăшĕ тантăшсем пулатăр. Ĕçĕр сирĕн йывăр, таса мар ĕç. Анчах эпир ĕмĕртен çапла ĕçе хăнăхнă вĕт. Атăл тăрах сулă хăвалама, Атăл тăрах тетел туртса пулă тытма, шахтăсенче кăмрăк чавалама, чугун çул качĕсене хывма та çăмăлах марччĕ. Ĕç йывăр тесе ан йӳçĕнкеленĕр. Мĕн вăй çитнĕ таран эпĕр сире пулăшăпăр. Мĕн çитмесси пулсан тӳрех хама калăр. Лачака кăмрăкĕ - пирĕн хисепсĕр пысăк пурлăх. Ăна пула эпир промышленность тума ĕмĕтленетпĕр... "Чипер кай ĕнтĕ, комиссарăмăр", -

теççĕ эртел çыннисем.

*   *   *

...Кӳме Мăн çурта пырса кĕчĕ. Мăн çуртрах халăх пасар пек кĕшĕлтетет. Чăваш, вырăс, çармăс, пуринчен ытла - çăпата сырнă чăваш. Çурăмсем çине кушильсем çакса, хул айĕсене хутаçсем хĕстерсе этемсем пур чăваш тĕнчинчен те пуçтараннă. Вирьялсем, анатрисем, анат енчисем. Вылă тĕпĕнчен, Енĕш айлăмĕнчен, Çавал тăршшĕнчен, Пăла лапĕнчен, Сĕвепе Сăрă туртăмĕнчен - пур енчен килнĕ этем те пур. Хресченĕн нуша хисепсĕр нумай: кама вăрлăх кирлĕ, кам çĕр ĕçлемелли машина ыйтать, кам çĕре виççе татма, нумай пусă туса чикĕлеме ыйтать. Кам та кам тата халăх ячĕпе çĕнĕрен аслăрах шкул уçма, больница лартса пама ыйтать. Кам та кам тата вырăнти йĕркесĕрлĕхсем çинчен, суд кукăрĕсем çинчен, Совет тытăмĕн йăнăшĕсем çинчен, кивĕ йĕркепе-йăлапа ĕçлекен тӳресем çинчен шалăпă пама килнĕ.

Нумай япала илтет, пĕлет, тăнлать çав Мăн çурт. Пĕтĕм чăваш çĕршывĕ, чăвашăн ама çĕршывĕ Мăн çурта хăйĕн пуçĕ вырăнне хисеплесе тăрать.

Пысăк лару, каçхи лару тапраннă. Тĕп Ĕçтăвком членĕсем, Халăх комиссарĕсем, хресченсем, вырăс рабочийĕсем...

Хунар вăр-вар пырса кĕрет те сĕтел хушшине кĕтесе пырса ларать. Лару пуçлăхĕ тăрать те çапла калать:

- Юлташсем! Паян пирĕн нумай пысăк ыйтусене пăхса тухмаллаччĕ. Çав ыйтусенчен нумайăшне тепĕр ларăва хăвармалла пулĕ: Шупашкартан Шăхрана чугун çул хывасси, Шăхрана хулана çавăрасси – хула хисепне кĕртесси, Театра чăвашлатасси, ăна валли çĕнĕ çурт тăвасси, Тытăм вырăнĕсенче чăвашла ĕçлесси, Чăваш çĕршывĕнче крахмал савăчĕсем тăвасси... кун йĕркинче тата та ыйтусем пур. Пурне те пăхса тухаймăпăр. Паян эпĕ Атăлпа Сăрă вăрманĕсене колонизацилесси çинчен канашласа илĕпĕр тетĕп. Хунар юлташ та килсе çитрĕ. Вăл вĕт пирĕн сĕм вăрманта кăна аташса çӳрет. - Пурте Хунар çине ăшă кăмăлпа пăхса илсе кулаççĕ.

Анчах Хунар комиссара темĕн пулнипех пулчĕ. Хăлха аяккисем хуралçă

шакканӑ пек шаккаҫҫӗ. Пуҫ шӑмми ҫурӑлас пек ыратать. Вӑхӑчӗпе вӑл шартлатса икке ҫурӑлса кайнӑ пек туйӑнать. Ӑшчикре ҫӗҫӗ хаяррӑн чикет, каскалать. Ӳт-тир вут пек пӗҫерет. Куҫ тӗттӗмленсе пырать. Лару пуҫлӑхӗ вӑхӑчӗпе икӗ пит-куҫлӑ пулса ларать... Ак тата пуҫлӑх ҫумӗ ларнӑ ҫӗртех, пуҫӗпе каялла чикӗнӗт те, урисене сӗтел ҫинчен ҫӳле тӑратса, пӑрахут шӑтӑрнакӗ пек ҫаврӑнма тытӑнать... Ларури юлташсен сӑнӗ-пичӗсем куҫ умӗнче сиккелесе ташлаҫҫӗ...

-Хунар юлташ, вара эсӗ мӗн пӗртте чӗнместӗн? Элле ытах ыртӑн-а? Элле каллех сывлӑху начар-и? - тет ҫемҫе сасӑпа пуҫлӑх.

Хунар юлташ васкаса тӑма хӑтланать, тайӑлса чикӗнсе сӗтел хӗррине ҫатӑртаттарса тытать... Куҫ умӗнче сӗм вӑрман шавлать... Пӗрре сӗм вӑрман пулать, тепре чӑваш пухӑвӗ пулать... Лачака хӑмӑшӗ маччаран ҫӳллӗ курӑнать... Ҫӗр ӗмекен тӑрана аслӑланса пӗлӗте шӑнӑҫми электростанци пулса тӑрать... Вӑл хӗвелрен те ытла ҫутӑ. Вӑрман савӑчӗ тӗнчере халиччен пулман акӑш-макӑш ҫурт пек каллӗ-маллӗ тайӑнкаласа ларать... Таҫта чӑвашсем ахӑрашни, йытӑ-качка верни илтӗнет.

-Чимӗр-ха, юлташсем, эпӗ те калам-ха... Атӑл, Сӑрӑ сӗм вӑрманӗсем... эпӗ паян... Лачака ҫутти электросавӑчӗ...

Сӑмахсем шӑл ҫумне сухӑр пек ҫыпҫӑнаҫҫӗ. Шухӑшсем пуҫра пӑтранса хытаҫҫӗ...

- Эпӗр пӗлетпӗр... Индустри авалран халӑх шӑмми-шакки ҫинче ҫуралса аталаннӑ... Малашне ӑна ҫутҫанталӑка алла илсе ӳстеретпӗр... Ҫав торф... Лачака... Атӑл шывӗ... хӑйӑрӗ... Мӑн ҫурт сасартӑк тайӑлса ишӗле пуҫларӗ... Мачча ӳкет, урай ҫӳлелле хӑпарать. Хунар урайпа пӗрле ҫурт тӑрринелле улӑхать. Таҫта аслати авӑтнӑ пек, ҫиҫӗм ҫиҫнӗ пек туйӑнать. Хунар урайне кӗрӗслетсе ӳкет. Лару сасартӑках ура ҫине сиксе тӑрать, пуҫлӑх, унӑн ҫумӗ, пур ларури ҫынсем те ун йӗри-тавра ҫаврӑнаҫҫӗ, ӑна ҫӗклесе лартасшӑн асапланаҫҫӗ.

- Тахҫантанпа кан тесе калаттӑм, отпуска кай, Капкаса кайса пурӑн тесе. Ялан - ӗҫ нумай терӗ, канмалли вӑхӑтсем мар халь терӗ. Ак ӗнтӗ халран та кайрӗ... такӑнчӗ те ӗнтӗ, -тет лару пуҫлӑхӗ шывланнӑ куҫӗсене тутӑрпа шӑлса

илсе.

- Ĕçчен тантăш, хастарлă пуçлăх, чăнтан юлташ такăнчĕ, - теççĕ уйрăм сасăсем.

Имшеркке хура ўт-пĕве пĕркесе, лучăркаса çĕклесе тухрĕç. Хура кăтра çўç пайăркисем вирелле сиксе тăнă, лачака пылчăкĕпе вараланнă атăсем каллĕ-маллĕ сулланса пыраççĕ.

* * *

Мускав... чуна сарса çунатлантаракан хула. Пролетариат тытăмĕ. Революци чĕри... Сиксе тăрса чупас килет, анчах вăй çук. Вакун ăшне Çăлтăрпа Куштан юлташсем кĕреççĕ.

- Эпĕр сана кĕтменччĕ... Мăн çурт телеграммине илсен тĕлĕнтĕмĕр. Çăлтăр юлташ антăхса кайса ўсĕрсе илет.

- Хам та çавах та... Ыран-паян такăнса ўкес пек кăна çўретĕп... Çăлтăр ĕçсем çинчен доклад туса парать. Вăл пысăк карттă кăларса доклад тăвать.

- Ак çак симĕс чикĕллĕ çĕршыв - Кĕçĕн Чăвашлăх... пирĕн хальхи çĕршыв. Ак çак ешĕл лап - Улатăр таври. Ак хĕрлĕ йĕрпе сăрланă вырăн - Аслă Чăвашлăх... Ку Аслă Чăвашлăх пуçхули... Чĕмпĕр вăл. Аслă Чăвашлăх хăй чиккипе Нимĕç, Пушкăрт, Тутар республикисемпе чикĕллĕ пулмалла... Аслă Чăвашлăх хĕвелтухăçĕнчи халăхсен малти пуçĕ, вĕсен форпосчĕ пулмалла... Облаçа республике çавăртăмăр. Ку та пулĕ тетĕп. Сталинпа калаçрăм. Рыковпа Совнаркомра пĕр-ик сăмах улăштарса илтĕм. Калинин та Тĕп Ĕçтăвком Президиумĕнче питех хирĕç пымасть пек...

Хунар нумай калаçасшăн, анчах пĕртте кăмăл çĕклемест, вăй çук.

- Тĕрĕс пулĕ-ши вара ку ĕç, Çăлтăр тантăш. Ман шухăшпа пирĕн çĕршыв чиккине этнографиленĕ границăран урлă кастарса тăсни килĕшўллех пулмĕ. Ак калăр-ха: капиталлă строительство плане тăрах чăваш çĕршывĕнче çĕнĕ фабрикăсемпе заводсем пулмалла-и е çуках-и?

Куштан юлташ шĕвĕр пуçне йăлт-ялт тăрататъ, хăй аллипе крахмаллă çухине ялан тўрлетет.

- Госпланра профессорсемпе тавлашрăм. Пулмасть теççĕ. Автономи мĕн вăл - вăл хут çинче çеç теççĕ. Патшалăх йĕркине хăйсен халĕпе тытма мар - вĕсем "патшалăх доктринисене" ăнланса çитме те пултараймаççĕ теççĕ. Эпĕ сĕтеле шарт çапрăм та ахăрма тытăнтăм. Вырăс специсем кăшт кăна сĕтелсем айне чикĕнсе пытанатчĕç.

Хунар кулса илме кăмăл тăвать те, анчах питçăмартисем янах çумне хама пек пусса тăраççĕ.

...Пуйăс хĕвеле хирĕç ялан шăвать, вĕçет, çĕр тăрах сĕтĕрĕнет..-. Кăнтăрпа хĕвел пуç тăрринелле çитиччен хăпарать. Украина çĕрĕ. Чăваш пек хресчен халăхĕн çĕршывĕ. Сиваш лачаки... Комиссаров ăна чăваш тени пулать тет. Авал чăвашсем çак таврара пурăннă тет, çавăнпа та вĕсен халапĕсенче ялан тинĕсе, арăслансене, вĕçекен çĕленсене асăнаççĕ тет.

Крым тутарĕсен республикĕ. Чăваш çĕршывĕнчен кăшт çеç пысăк. Халăхĕ чăвашсенчен икĕ-виçĕ хут та ытла сахал. Мăнтăр çĕршыв, муллă çанталăк. Йĕри-тавра хĕвел, хисепсĕр нумай хĕвел сути... Анчах пирĕн çĕршыв питех те ырхан-çке... Севастополь... Асатте çакăнта французсемпе, акăлчансемпе, итальянецсемпе çапăçнă... Тинĕс урлă Константинополь. Унта вырăс миссионерĕсенчен тарса ӳкнĕ чăваш килйышĕсем пурăнаççĕ теççĕ. Тусем пĕлĕтсене тĕрĕлесе лараççĕ.

Хура тинĕс Атăлран хытă шавлать, Атăлран хăрушă кĕрлет...

Пуçра шухăш татăкĕсем кăна сĕмленеççĕ. Вĕсем умлă-хыçлă юртаççĕ, пĕрне-пĕри перĕнсе иртеççĕ. Анчах вĕсен пуçĕ-вĕçĕ таçта çухалнă...

*Юман, М. Пурлăх комиссарĕ : [кĕскетнĕ] / М. Юман // Чăваш сăмахлăхĕ : 10-мĕш класăн вĕренӳпе вулав кĕнеки / Н. Г. Иванова, В. П. Никитин, С. С. Самсонова пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар, 1996. – II пай. – С. 152-159.*